Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

76 (8037) № ✻ Юн кун, 2012 ҫулхи юпа (октябрь) уйӑхӗн 3-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Октябрӗн 5-мӗшӗ – Вӗрентекен кунӗ

## Юратнӑ ӗҫ: ачасем, уроксем, кружоксем



*Альбина Васильевна Ятманова Ҫатракассинчи вӑтам шкулта ӳкерес пултарулӑха, технологи, географипе тӑван ен культурине вӗрентет. Унӑн ӗҫ опычӗ пысӑк – 26-мӗш ҫул ачасене пӗлӳ парассипе тӑрӑшать. Ҫитӗнӗвӗсем те куҫ умӗнчех: пӗлтӗр акӑ районти олимпиадӑра вӑл вӗрентекен Татьяна Владимирова технологипе мала тухнӑ, вӑлах «Кружковец года» конкурсра иккӗмӗш вырӑн ҫӗнсе илнӗ. Альбина Васильевна хушма пӗлӳ паракан педагог та: чӑваш тӗррине юратма, ӑна тӗрлеме вӗрентет. Вӗрентекенӗн уроксем ертсе пынипе кӑна ҫырлахмалла мар, паллах, унӑн класс ертӳҫи те пулмалла. Альбина Васильевнӑн ачисем акӑ кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче вун пӗрмӗш класра вӗренеҫҫӗ. Апла вӗсемпе тимлемелли ытти ҫулхинчен нумайрах.*

**Н. НИКОЛАЕВА сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Ял хуҫалӑхӗ

## Сӗт туса илекенсене – патшалӑх пулӑшӑвӗ

Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн Михаил Игнатьевӑн Указӗпе килӗшӳллӗн сӗт туса илекенсен тӑкакӗсене саплаштарас ӗҫ пырать. Ӑна пурнӑҫлама республика бюджетӗнчен 69,6 миллион тенкӗ уйӑрма палӑртнӑ.

Ял хуҫалӑх организацийӗн тӑкакӗсене саплаштарма 21767,5 пин тенкӗ вырӑнсене ҫитнӗ. Ку пулӑшӑва республикӑри 199 ял хуҫалӑх организацийӗ тивӗҫнӗ (хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсем те кӗреҫҫӗ). Районти ку категори хуҫалӑхсем валли июнь-июль уйӑхӗсемшӗн 1421 пин тенкӗ уйӑрнӑ. Вӑл 2063 пуҫ ӗнерен сӗт туса илнипе килнӗ. Август уйӑхӗшӗн вара 480 пин те 481 тенкӗ пулмалла.

Хушма хуҫалӑх тытакансем валли республика шайӗнче пӗтӗмпе 41,2 миллион тенкӗ уйӑрнӑ. Района июнь-июль уйӑхӗсемшӗн 3 миллион та 328 пин тенкӗ килнӗ. Августшӑн вара – 2 миллион та 320 пин тенкӗ. Ку укҫа 4 пин пуҫ ытла ӗнешӗн килнӗ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

«Таса шыв» программа

## Калмӑккассисене – пахалӑхлӑ шыв

Правительство шайӗнче палӑртнӑ "Таса шыв" программа районта та майӗпен пурнӑҫланать. Паянхи кун тӗлне Москакасси ял тӑрӑхӗнчи Калмӑккасси ялӗнче шыв пӑрӑхӗ хунӑ, башня лартнӑ. Ҫакӑнта пурӑнакансем ку таранччен ҫӑлти шывпа усӑ курнӑ, шыв пӑрӑхӗ пулман. Халӗ кунта шыв пахалӑхне тӗрӗслесси, документсем йӗркелесси пырать. Ҫитес вӑхӑтрах ку тӑрӑхсем «Таса шыв» программа витӗмне туйма пуҫлӗҫ.

Асӑннӑ программӑпа килӗшӳллӗн пурнӑҫламалли ӗҫ валли федераллӑ бюджетран 5 миллион тенкӗ, республика бюджетӗнчен 3 миллион тенкӗ тата ытти пайне вырӑнти бюджетран уйӑрнӑ.

Ҫавӑн пекех Ильинка ял тӑрӑхӗнчи Мемеккасси, Вӑрманкасси, Шерӗк ялӗсенче пурӑнакансене те ӗҫмелли пахалӑхлӑ шывпа тивӗҫтерес тӗллевпе скважина чавнӑ, башня лартнӑ. Ҫак ӗҫ валли 2 миллион та 15 пин тенкӗ уйӑрнӑ.

**Р. МАКАРОВА.**

## Ача сачӗсем тума – кредит

Шкулчченхи вӗренӳ учрежденийӗсене тӑвассипе реконструкцилесси хальхи вӑхӑтра республика аталанӑвӗн социаллӑ пӗлтерӗшлӗ тата малашлӑхлӑ енӗсенчен пӗри шутланать. Чӑваш Республикинче 2012–2014 ҫулсенче вӗренӗве аталантармалли республика тӗллевлӗ программин «Чӑваш Республикинче 2011–2020 ҫулсенче шкулччен вӗренӳ учрежденийӗсен тытӑмне аталантарасси» подпрограммӑна кӗртнӗ учреждениесене хута яма Пӗтӗм тӗнчери финанс корпорацийӗпе килӗшӳ туса республика 500 миллион тенкӗ кредит илнӗ.

Кредитпа усӑ курса республикӑра 47 ача сачӗ тума, вӗсенче 7000 ача валли вырӑн йӗркелеме май пулӗ.

**ЧР Финанс министерствин сайтӗнчен.**

Сана валли, ял ҫынни

## Ҫӗнӗ пасар уҫӑлчӗ

Ыранхи кун аталанӑвӗ хамӑр умри ӗҫ-хӗл ҫине эпир паян мӗнле пӑхнинчен, тӗллевӗмӗрсене татса парассипе ҫак самантра епле тимленинчен пуҫланать.

Паян ялта пурӑнакан килти хушма хуҫалӑха аталантарса ҫемье бюджетне пуянлатассипе тӑрӑшать. Ку ӗҫре вара хушма хуҫалӑхра туса илнӗ продукцие сутасси пӗлтерӗшлӗ. Ял хуҫалӑх продукцине ӑнӑҫлӑ сутасси – пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсемшӗн те малти вырӑнта. Продукци туса илес ҫул ҫинче вӗсем кашниех патшалӑх пулӑшӑвӗпе усӑ курса хуҫалӑха малалла аталантарассине тӗп вырӑнта тытаҫҫӗ.

Районта ял хуҫалӑхӗнче туса илнӗ продукцие сутассипе малалла ларутӑру ансатрах пулӗ. Ҫак тӗллевпе Г. Михайлов тӑрӑшнипе, район пулӑшнипе, ыранхи кунпа пурӑнакан предпринимательсем хавхалантарнипе иртнӗ шӑмат кун, авӑн уйӑхӗн 29-мӗшӗнче, Москакассинче ял хуҫалӑх пасарӗ уҫӑлчӗ.

– Виҫӗ ҫул кӗтрӗмӗр эпир ҫак пасар уҫӑлассa. Тинех кӗтни пурнӑҫа кӗчӗ. Ял ҫыннисен малашне килти хушма хуҫалӑхри продукципе Шупашкара каймалла пулмасть. Москакассинчи ӑшӑ павильонрах суту-илӳ ӗҫӗ ӑнса пырасса шанатӑп, – терӗ пасар уҫнӑ вӑхӑтра П. Терентьев предприниматель.

Пасар уҫӑлни пирки хаҫатӑн ҫитес номерӗнче тӗплӗнрех каласа парӑпӑр.

**А. БЕЛОВ.**

Саламлатпӑр

Район хаҫачӗн активлӑ ялкорне, ӗҫпе вӑрҫӑ ветеранне, таврапӗлӳҫӗне, сумлӑ вӗрентекене, районӑн Хисеплӗ ҫыннине, чӑваш халӑх академикне **Иван Дмитриевич ВЯЗОВА** юбилей ячӗпе пӗтӗм кӑмӑлтан саламлатпӑр. Вӑрӑм ӗмӗр, сывлӑх, телей сунатпӑр.

Пултарулӑх ӗҫӗнче ҫӗнӗ ӳсӗмсем тума сирӗн ялан вӑйӑл пултӑр.

**Редакци коллективӗ.**



Хаклӑ мӑшӑрӑма, аттене, шӑллӑма, пиччене – Чуманкасси ялӗнче пурӑнакан **Николай Аверкиевич АВЕРКИЕВА** 70 ҫулхи юбилей ячӗпе ӑшшӑн саламлатпӑр. Малалла нумай ҫул пурӑнма ырлӑх-сывлӑх, телей сунатпӑр, пурӑн эсӗ ҫӗр ҫул савӑнса.

**Саламлакансем: мӑшӑрӗ, ывӑлӗ, хӗрӗпе кӗрӳшӗ, мӑнукӗ, аппӑшӗ, йӑмӑкӗпе мӑшӑрӗ, ҫывӑх тӑванӗсем.**



Пирӗн хаклӑ та юратнӑ ҫыннӑмӑра – Отаркка ялӗнче пурӑнакан **Иван Павлович ПАВЛОВА** 70 ҫулхи юбилейпа ӑшшӑн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр. Турӑ сана вӑй-хал парнелетӗр, чирчӗртен упраса тӑтӑр. Анлӑ кӗрекӳ ачусемпе тӑванусене яланах хапӑл тутӑр. Эс пурри – пирӗншӗн пысӑк савӑнӑҫ, телей.

**Саламлакансем: мӑшӑрӗ, ывӑлӗсемпе кинӗсем, мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем.**

Республикӑра

## 28,5 миллион тенкӗ кирлӗ пулӗ

Шӑпах ҫакӑн чухлӗ укҫа-тенкӗ кирлӗ пулать Чӑваш Ене универсаллӑ электронлӑ карттӑна ӗҫе кӗртме. Ку суммӑна 2012 – 2013 ҫулсем валли пӑхса хунӑ. Сентябрӗн 26-мӗшӗнче ЧР Министрсен Кабинечӗ «Универсаллӑ электронлӑ карттӑ» саккун проектне ырланӑ.

Чӑваш Республикин информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министрӗ Валентина Андреева палӑртнӑ тӑрӑх универсаллӑ электронлӑ карттӑпа усӑ курма тытӑнассине федераллӑ саккунпа пӑхса хунӑ. Ытти регионсенче те ку ӗҫ сарӑлса пырать ӗнтӗ.

Карттӑра ҫын кам пулнине ҫирӗплетекен, обязательнӑй медицина страхованийӗн полисӗн, обязательнӑй пенси страхованийӗн свидетельствин, банкӑн тӳлев карттин даннӑйӗсем пулӗҫ.

## Планлас ӗҫре Чӑваш Ен малта

Территорисене планлассине йӗркелессипе Атӑл тӑрӑхӗнче Чӑваш Ен малта. Ҫакна Раҫҫей территорисене планлассипе ӗҫлекен правительство комиссийӗн ларӑвӗнче палӑртнӑ. Анчах ку енӗпе туса ҫитереймен ӗҫсем те сук мар-ха.

Аса илтеретпӗр: Атӑл тӑрӑхӗнчи федераллӑ округа кӗрекен регионсенче муниципаллӑ пӗрлешӳсен территорисене планлассин тата хула строительствин зонированийӗн ӗҫсене документлӑ майпа 2013 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗччен хатӗрлесе ҫитермелле.

## 2015 ҫул тӗлне вӗҫлемелле

Чӑваш Енӗн централизациленӗ майпа хыпарлассин регионти автоматизаци системине модернизацилес ӗҫе 2015 ҫул тӗлне вӗҫлемелле. Ҫакӑн пек задача лартнӑ республика Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечӗн ларӑвӗнче.

2012 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче иртнӗ комплекслӑ тӗрӗслев вӑхӑтӗнче ку енӗпе пысӑк ҫитменлӗхсем пулни палӑрнӑ.

Ҫак кунсенче Чӑваш Енре командӑпа штаб вӗренӗвӗсем иртеҫҫӗ. Ҫавна май республикӑна Раҫҫей МЧС Атӑл тӑрӑхӗн регион пуҫлӑхӗ Игорь Паньшин килсе ҫитнӗ. Ун умӗн пӗр кун маларах Правительство ҫуртӗнче вӗренӗве хутшӑнакансем пухӑннӑ. Чӑваш Республикин информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министрӗ Валентина Андреева чрезвычайлӑ лару-тӑрура халӑха хыпарлассин ыйтӑвӗсемпе доклад туса панӑ. Тепӗр кунне иртен тытӑнса практикӑлла занятисем иртнӗ.

## Электронлӑ ҫыхӑну: малашлӑх пур

Сентябрӗн 17 – 18-мӗшӗсенче Чӑваш Ен Информполитика министерстви патшалӑх тата муниципаллӑ услугӑсемпе тивӗҫтернӗ чухне кирлӗ универсаллӑ 16 процесӑн тестне иртнӗ. Тӗрӗслев ҫакна кӑтартса панӑ: ведомствӑсем хушшинче электронлӑ майпа ҫыхӑнса ӗҫлессин малашлӑх пур, республика влаҫ органӗсен сотрудникӗсем услугӑсемпе тивӗҫтернӗ чухне пӗр-пӗрин хушшинче информацие ылмашӑнма асӑннӑ мелпе усӑ кураҫҫӗ.

Хальлӗхе социаллӑ пӗлтерӗшлӗ 14 тӗрлӗ услугӑпа тивӗҫтернӗ чухне унпа усӑ курни паллӑ. Ҫавна валли ӗҫ тӑвакан федераллӑ влаҫ органӗсен электронлӑ 13 сервисӗпе тата Чӑваш Республикин ӗҫ тӑвакан влаҫ органӗсен универсаллӑ 16 процесӗпе ҫыхӑнса ӗҫлени кирлӗ.

Район уй-хирӗсенче

## Юр айне хӑвармӑпӑр

Кӗрхи ҫанталӑк йӗпе-сапапа пуян. Ҫакна пӗлсе тӑрса кӗрхи ӗҫсене юлнӑ гектарсем ҫинче вӗҫлесси – паянхи тӗп ыйту. Юпа уйӑхӗн 1-мӗшӗ тӗлне районти ял хуҫалӑх предприятийӗсенче ҫӗр улми кӑларас ӗҫ – тӗп вырӑнта. Район администрацийӗн экономикӑпа АПК аталанӑвӗн пайне пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенчен тӑратнӑ оперативлӑ кӑтартусемпе асӑннӑ кун тӗлне районти ҫӗр ӗҫченӗ «иккӗмӗш ҫӑкӑра» 776 гектар ҫинчен (78 процент) пуҫтарса кӗртнӗ. Кӑларман лаптӑксем «ДаАн», «Ударник» хуҫалӑхсенче ытларах: 20 гектартан пуҫласа 170 гектар таран.

Ҫӗр улмин вӑтам тухӑҫӗ гектар пуҫне 160 центнер.

**Хамӑр инф.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления




**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок и замок на ручках окон. Шестикамерный профиль по цене трехкамерного. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 10-10.**

* * *

**Продаю пресс-подборщик квадратный «Сипма» польский, дисковую борону БДТ-3. Тел.: 8-905-341-01-86.**

* * *

**Куплю металлический гараж на вывоз, продаю автомашину ВАЗ-2112 2005 года выпуска, в отличном состоянии. Тел.: 8-927-857-42-06. Владислав.**

* * *

**Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» проводит набор на обучение по профессии «Слесарь по эксплуатации и ремонту газового оборудования» с последующим трудоустройством. Обучение начнется 15 октября 2012 года. За справками обращаться по тел. 60-2-27. 2-3.**

* * *

**ООО «Межрегиональный Центр Финансирования» для работы в с.Б.Сундырь ТРЕБУЕТСЯ МЕНЕДЖЕР ЗАЙМОВ.**

Вы — специалист с высшим экономическим или юридическим образованием, имеете опыт работы в кредитовании, бухгалтера, кассира. Вы активны, хотите работать и умеете учиться, ориентированы на результат, внимательны к клиентам. Тогда примите участие в конкурсе на вакансию «менеджера займов».

Требования: женщина до 35 лет.

**Условия работы: с 8.00 до 17.00, пятидневка, оплата от 9 тыс. руб., проводится стажировка.**

**Тел.(8352)39-54-14, kadry_sodrugestvo21@mail.ru**

**В связи с открытием АГЗС 611 км автодороги М-7 рядом с д. Юнгапоси требуются наполнители баллонов: муж./жен., от 18 лет, желательно с опытом работы. Мы предлагаем сменный график работы (сутки через трое), официальное трудоустройство, заработную плату от 10000 руб. Тел.: 8(83541)69799; e-mail: anna.tranzit@mail.ru**

**М-7 автоçулăн 611 км Юнкăпуç ялĕпе юнашар АГЗС уçнă май ĕçе илетпĕр: баллон тултаракансене: арçынсем/хĕрарăмсем, 18 çултан аслăраххисене, ĕç опычĕ пуррисене. Эпир куçса пыракан ĕç графикĕ сĕнетпĕр (пĕр талăк ĕçлесе виçĕ талăк канмалла), ĕçе официаллă вырнаçтаратпăр, ĕç укçи 10000 тенкĕрен пуçланать. Тел.: 8(83541)69799; e-mail: anna.tranzit@mail.ru 3-4.**

* * *

**Работа в Москве и МО: фасовщицы, упаковщицы, грузчики, комплектовщики. Жилье, питание, транспорт – БЕСПЛАТНО. Вахта 15, 20, 30, 45 дней, з/п от 27 000 руб. (своевременная). Тел.: 8(8352) 36-42-92, 36-42-94. 1-5.**

* * *

**Продам: кровати армейского образца – 1000 руб.; матрац, подушка, одеяло – 700 руб.; дверь металлическая производство Китай – 3000 руб. Доставка бесплатная. Тел.: 8-915-051-94-23, 8-916-417-06-84. 1-12.**

* * *

**Требуются продавщицы и повара. Адрес: д. Москакасы, ул. Московская, 54 «Б». Тел.: 8-987-576-90-40.**

* * *

**Вăкăр, пăру, сурăх туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13.**

* * *

**Большесундырское райпо набирает двухмесячные бесплатные курсы поваров с последующим трудоустройством. Обращаться в отдел кадров райпо, телефоны: 69-5-46, 69-1-79.**

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Трофимова Валентина Вячеславовна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Центральная, д.38.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, общей площадью 8.04 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободных земельных участков, распределяемых на праве аренды из категории земель промышленности и иного специального назначения для размещения и эксплуатации опор воздушной линии электропередачи для электроснабжения башни базовой станции сети сотовой радиотелефонной связи:**

**- с кадастровым номером 21:17:061003:74, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, общей площадью 11 кв.м.;**

**- с кадастровым номером 21:17:070505:180, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, общей площадью 12 кв.м.;**

**- с кадастровым номером 21:17:070301:213, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, общей площадью 7 кв.м.;**

**- с кадастровым номером 21:17:000000:356, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, общей площадью 10 кв.м.;**

**- с кадастровым номером 21:17:000000:357, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, общей площадью 13 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:281001:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Родионов Николай Александрович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Торханы, ул. Садовая, д. 15. Родионова Людмила Николаевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Торханы, ул. Садовая, д. 15.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:281001:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, общей площадью по 13800 кв.м.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

**Продаю дубовые доски необрезные разной длины и ширины, толщина 5-8 см. Цена договорная. Тел.: 8-908-307-07-44, 63-0-39. Николай.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 1-10.**



**5 октября в РДК с 8.00 час. до 16.00 час. состоится выставка-продажа обуви Ульяновской, Белорусской и др. российских обувных фабрик из натуральной кожи, а также выставка-продажа трикотажных изделий.**

## Прогноз погоды

| | среда 3 октября | | | | четверг 4 октября | | | | пятница 5 октября | | | | суббота 6 октября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +3 | +6 | +9 | +6 | +6 | +7 | +9 | +8 | +9 | +11 | +14 | +11 | +10 | +10 | +14 | +10 |
| Давление мм | 753 | 754 | 753 | 752 | 751 | 749 | 748 | 747 | 745 | 745 | 745 | 746 | 745 | 745 | 744 | 743 |
| Влажность % | 92 | 82 | 63 | 90 | 86 | 90 | 87 | 99 | 94 | 93 | 77 | 95 | 89 | 89 | 55 | 70 |
| Ветер м/сек | 1 | 1 | 1 | 2 | 3 | 4 | 3 | 4 | 3 | 3 | 3 | 3 | 4 | 5 | 5 | 6 |
| | С-З | В | З | Ю-В | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю | Ю | Ю | Ю |
| Солнце восход / заход | | 07:01 | 18:21 | | | 07:03 | 18:19 | | | 07:05 | 18:16 | | | 07:07 | 18:14 | |
| Луна восход / заход | | 19:09 | 10:48 | | | 19:41 | 11:53 | | | 20:20 | 12:52 | | | 21:08 | 13:43 | |

## Тав тăватпăр

2012 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн хуçалăхра пысăк инкек пулчĕ – пушар тухрĕ. Çак инкекпе кĕрешнĕшĕн, пушара ытлашши алхасса кайма ирĕк паманшăн пирĕн пата пынă кашни çынна, кӳршĕ-аршăсене, Шаптакпа Тойкилтĕ ял çыннисене, тăвансене, ĕçтешсене тав сăмахĕ калатпăр.

Уйрăмах Кузнецовсене, Евстафьевсене, Леонтьевсене, Ванифоновсене, Александровсене, Михайловсене, Паргеевăна, Ивановсене, Касьяновсене асăнас килет.

**Мăн Шаптакра пурăнакан Ивановсен çемйи.**

**ООО «Виктория»**

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельных участков

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:091201:185, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:091201, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4082 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:130103:186, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, земельный участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:130103, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4013 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1272, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:160303:229, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с.Моргауши, ул.Мира, для установки временного торгового павильона, площадью 25 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1273, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6091 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1279, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1278, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060406:53, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с.Большой Сундырь, ул.Заводская, для содержания и обслуживания зданий и сооружений (сараев), площадью 440 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинет №312 с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн коллективĕ хаçат редакцийĕнче чылай çул хушши ответлă секретарьте ĕçленĕ Ф.И. Илларионовăн хĕрĕ

**Инесса Михайловна МИЛЮТИНА**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 02.10.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4683.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.